# «ПУЛТАРУЛЛĂ АЧАСЕНЕ ПУЛĂШМАЛЛА...»



**Калайкасси шкулĕнче тимлекенсен канашĕ 5 çул ĕçлет ĕнтĕ. Çавра дата, пĕчĕк юбилей теме те пулать.**

Çакна шута илсе эпир сире паян тимлекенсен канашĕнче тăракан, шкула пулăшакан Валерий Рубцов усламçăпа паллаштарăпăр.

***Пирĕн досье***

Валерий Рубцов 1958 çулта çуралнă. 5-мĕш класчен Калайкасси шкулĕнче вĕреннĕ, кайран Муркашра. 1973-1977 çулсенче Федор Павлов ячĕллĕ музыка училищинче баян калама вĕреннĕ. 1977-1979 çулсенче çар хĕсметĕнче — çарăн Çурçĕр ушкăнĕнче Польша çĕрĕнче пулнă. 1980 — 1984 çулсенче Машзаводра баянист-концертмейстрта ĕçленĕ. /худрукĕ Николай Карлин/. 1983-1993 çулсенче БАМ тата Амур-Якут магистральне тунă çĕртре взрывник ĕçĕнче вăй хунă. Таврăнсан усламçă ĕçĕпе ĕçлеме тытăннă.

Калайкасси шкулĕнче 5 çул каялла тимлекенсен канашне уçнă хыççăн унăн активлă членĕ пулса тăнă. Пĕрремĕш ĕçсенчен пĕри — «Муркаш шăпчăкĕ» чăваш халăх юррисен фольклор конкурсĕ.

Мăшăрĕ Ирина Павловна Шупашкарти 62№ шкулта пуçламăш класра вĕрентет, ывăлĕ Дима çав шкултах ăс пухать, Катя хĕрĕ Надым хулинче учительте ĕçлет.

**Халĕ Валерий Рубцов халăха строительство материалĕсемпе тивĕçтерет, пурасем касса сутать.**

— Шкул пурнăçĕ юлашки çулсенче лайăх енне улшăнчĕ пулин те проблемăсем пур. Вĕсенчен пĕри — шкул ачисем тивĕçлĕ пĕлӳ илейменни, кирлĕ профессие суйласа илнĕ чухне именчĕклĕрех пулни. Çакăнтан ăнăçу, пурнăçпа туллин усă курманни килет. Çавăнпа та тимлекенсен канашĕ валли кунта уçман уй темелле.

Шкулта иртекен мероприятисене те укçа-тенкĕпе тивĕçтермелле, пултаруллă ачасене пулăшмалла.

# ÇĔР-ШЫВ ПУЛАСЛĂХĔ

**Вĕсем — 16 çултан пуçласа 22 çулхи çамрăксем. Вĕсем пурте хăйсене пĕлĕвĕн çав е ку хутлăхĕнче палăртма пултарнă. Вĕсенчен пĕри кăткăс компьютер программисене çырать, тепри техника агрегачĕсене ăсласа кăларать**...

Çак хĕрсемпе каччăсен талантне асăрхамасăр хăварман. Эпир паян сире икĕ çамрăкпа паллаштарăпăр. Вĕсем кашни хăйсен тĕпчевĕсемшĕн 60 пине яхăн тенкĕ илнĕ. Çак çамрăксем çитес вăхăтра Раççей обществин элити пулса тăрассине АН ИККĔЛЕНĔР.

ДИ КАПРИО ПУТМАЛЛА

Пĕчĕк ача хăй тĕллĕн тăхăнать, анчах тӳмеленме пултараймасть пулсан, вăл мĕнле ӳсĕмре-ши? Пулас президент стипендиачĕ, Тамбов патшалăх техника университечĕн информаци технологи факультетĕнче вĕренекен Дима Бабанин «Сывă ача» комплексĕ валли программа çырнă чухне çак ыйтăва лартнă. Ку темăпа вара пустуйран кăсăкланман. Вăл 18 çулта пулнă чух çăлакансен ятарлă хатĕрлев курсĕнче пулнă. «Курс пĕтернĕ хыççăн хулари çăлакансен хĕсметĕнче /служба/ ĕçлеме тӳр килчĕ. Тĕрлĕ пăтăрмах пулнă çĕре çӳреттĕмĕр, шăнкăравсене йышăнаттăмăр.

Пĕррехинче пĕчĕк ачан алли диванпа алăк хушшине хĕсĕнсе ларнă, анчах та пулăшма пӳлĕме ниепле те кĕме май çук. Эпир пӳлĕме чӳрече витĕр кĕтĕмĕр те ачана «тапăран» хăтартăмăр», — каласа парать Дима. Çак факт Димăна 2006 çулта çӳлерех асăннă комплекса шутласа кăларма хистенĕ те. Программа участокри педиатрсене вак-тĕвек ĕçсене хăвăртрах вĕçлеме, хулăм справочниксенчи информацие хăвăртрах шырама, ачапа ашшĕ-амăшне ытларах вăхăт уйăрма пулăшать. Раççейре çакăн пек комплекс урăх çук.

Программăн интерфейсĕ питĕ ансат. Педиатр кашни ачан дынныйĕсемпе ĕçлеме, унăн аталанăвне тĕрĕслесе тăма, чир мĕнле аталанма пултарассине тата профилактика мĕнле йĕркелемеллине пĕлсе тăрать. «Сывă ача» комплексăн тата нумай усăллă функци пур. «Эпĕ программăсем çырассипе 6-мĕш класрах кăсăкланнă. Ун чухне «Титаник» фильм антăхса курачĕç. Ун никĕсĕ çинче вăйă çуралчĕ: «Титаник» айсберг çине ишет, палуба çинче фильмри тĕп геройсем шыва сикеççĕ, вĕсене çăласси — вăйăн тĕп сюжечĕ. **Вăйă сюжечĕ тăрăх Ди Каприо путать, мĕншĕн тесен мана вăл килĕшмест»**, — каласăва малалла тăсать Дима.




Вăл университета вĕренме кĕрсен «Дизель двигателĕсен диагностикин системи» проекта пурнăça кĕртет. Унăн çитĕнĕвне Раççейре иртекен «Çамрăксене çĕнĕ технологине вĕрентесси» конкурсра пысăка хурса хакланă. Дима 5 пин доллар çĕнсе илнĕ.

ЧАП СЛАВĂНА ЧĂРМАНТАРМАСТЬ

Липецк педагогика университетĕнче I-мĕш курсра вĕренекен Слава Тигров паллă изобретатель, 5 патент хуçи. Кăçалхи кĕркунне иртнĕ «Раççей валли идея» конкурса 17 çулхи каччă çĕр улмие сортлакан ял хуçалăх агрегатне тăратнă. Вăл 5 çултах тĕрлĕ япала ăсталама, шутласа кăларма пуçланă. Çавăн чухне ăна ашшĕ, Вячеслав Петрович, ывăлĕн пӳлĕмне чăн верстак вырнаçтарнă, амăшĕ, Нина Ивановна, пĕчĕк ачана пăчăкă-сава тыттарма хăрушă тесе каланине те хăлхине чикмен. Слава 2-мĕш класран авиамодель кружокне çӳренĕ, хăйĕн аллипе планерсем, резина моторлă самолетсем, сывлăш çĕленĕсем ăсталанă. 8-мĕш класра вара изобретатель ĕçĕпе чăнласах ĕçлеме тытăннă. Областьре иртнĕ олимпиадăра çĕнтернĕ хыççăн, Курск хулинче иртнĕ Раççей шайĕнчи олимпиадăна каять, конкурса пир-авăр нăкăлăхне /плотность/ виçме пултаракан хатĕре тăратать. Вăл пăрăхран, вентиляторпа индикатортан тăнă пулнă. 2005 çулта Тамбов хулинче иртнĕ олимпиадăра конструктор-пуçватмăш кăтартать. Çак экспериментлă вăйăпа халĕ унăн 4 çулхи йăмăкĕ вылять. Нумаях пулмасть Слава хĕвел-магнит насос шутласа кăларнăшăн патент илчĕ. Модель хĕвел хевтипе /энерги/ĕçлет, талăкне 70 л шыв уçлать. Агрегат ял тăрăхĕнче питĕ усăллă пулмалла.



# ЧИТЛĔХРИ ЮРАТУ

**Çуркуннеренпе лăпкăлăха çухатрăм. Никампа калаçма та, сĕнӳ ыйтма та пулмасть. Ку манăн чи пысăк вăрттăнлăх. Хамăн хуйхă-суйхă çинчен кампа та пулин чуна уçса калаçас килет, анчах та манран куласран, ăнланаймасран хăратăп. Хисеплĕ вулакансем, тархасшăн, мана пулăшăр. Хамăн ята тата шкула палăртман тесе тимлĕхсĕр ан хăварăр. Тен сирĕн хушăра мана канаш пама пултаракансем пур.**

Эпĕ ялти пĕр лайăх çемьере çуралса ӳсрĕм. Манăн аттепе анне те вĕреннĕ çынсем. Пирĕн çемьере кашни хăйĕн ĕçне тĕплĕн тума хăнăхнă: ачасен лайăх паллăсемпе вĕренмелле, аттепе аннен укçа ĕçлесе илмелле. Мĕн кирлине пире яланах илсе панă, кĕсьере укçа çукки пулман та пулĕ. Маншăн, кăçалхи çуркуннеччен, пуласлăх мĕнле пуласси те паллăччĕ: шкултан лайăх вĕренсе тухса университета вырнаçасси, кайран лайăх ĕçе /ку енĕпе кукка пулăшатăп тесе паян та аннене сăмах парать/, унтан вара ăнăçлă качча тухасси...

*Денис шыв ăшне кĕрсе ӳкрĕ те путма пуçларĕ!.. Славик çакна курсан хăма тăрăх мар, пăр çĕмĕрсе, путакан ача патне кĕрсе кайрĕ, шывран туртса кăларчĕ.*

Анчах та çуркуннехи каникулта пирĕн яла Славик /ятне улăштаратăп/ хăйĕн кукамăшĕ патне килчĕ. Эпĕ ун çемьйине лайăх пĕлетĕп. Унăн ашшĕпе амăшĕ ял халăхне час-часах аса илтереççĕ: е урам тăрăх пĕр-пĕрне сенĕкпе хăваласа чупаççĕ, е пĕчĕк ачисене пăрахса /Славикăн йăмăкĕпе шăллĕне/ эрни-эрнипе эрехре ĕçсе çӳреççĕ, е çынсен 60 соттисем çинчен çĕр улми вăрлаççĕ... Ку çуркуннеччен Славик та маншăн иккĕмĕш сортлă çын пекчĕ. Мĕн пур ун çумĕнче — 9-мĕш класса аран-аран пĕтернĕ, урăх ниçта та вĕренмен, ниçта та ĕçе кĕмен.

Кăçал çуркунне, çырмана шыв аннă вăхăтра, шкул çулне çитмен 2 ача «пăрахутсем» яма пĕвери пăр çине кĕрсе кайнă. Кĕрессе кĕнĕ-ха, каялла тухаймаççĕ. Аслисем кĕме тăраççĕ — пăр ванса каять... Пирĕн пек пăхса тăракансем нумайăн, пур те ачасене хăйсен ашшĕ-амăшĕ çăласса шанаççĕ. Пăх та, Славик пĕр пысăк хăма васкаса сĕтĕрсе анать. Вăл ăна пăр çине шуçтарса хучĕ те ачасене хăма патне утма хушрĕ. Лешсем чуппипех хăма патне ыткăнчĕç... Никита хăма çине пусма ĕлкĕрчĕ-ха. Унта пăр çӳхе пулнă пулмалла — çурăлса кайрĕ. Денис шыв ăшне кĕрсе ӳкрĕ те путма пуçларĕ!.. Славик çакна курсан хăма тăрăх мар, пăр çĕмĕрсе, путакан ача патне кĕрсе кайрĕ, шывран туртса кăларчĕ.

Славик паттăрлăхĕ пирки пĕр-ик кун калаçрĕç те ун çинчен манчĕç. Ытларах ачасен ашшĕпе амăшне тимсĕрлĕхĕшĕн айăпларĕç. Маншăн вара Славик паттăрлăхĕ ĕмĕрлĕхех чĕрене кĕрсе вырнаçрĕ. Çак кунтан пуçласа çĕр çинче Славик пуррине пĕрремĕш хут асăрхарăм. Çак кунтан пуçласа эпĕ хамăн канăçа çухатрăм.



Славик кукамăшĕ патне / вăл пирĕнтен инçех мар пурăнать/ килессе чăтăмсăр кĕтеттĕм. Май пур таран ун тĕлне пулма тăрăшаттăм. Клуба тухсан та пĕрремĕш сăмах хам чĕнеттĕм. Кун пекки халиччен нихăçан та пулман!!! Эпĕ Славика килĕштернине юлташ хĕрсем те асăрхарĕç, манран кулма пуçларĕç. Славик та сисрĕ пулас çакна. Пĕррехинче мана киле ăсатма пычĕ те çапла каларĕ: «Эсĕ мана питĕ килĕшетĕн. Тахçанах килĕшетĕн. Анчах та эпир çавах пĕрле пулаймастпăр, ăнлан çакна. Аçу-аннӳ сана манпа калаçтармĕç. Мĕн, эсĕ йĕретĕн-и? Ан йĕр, йăлтах йĕркеллĕ пулĕ». Вăл мана пĕрремĕш хут ыталарĕ — ăшшăн-ăшшăн, çепĕççĕн-çепĕççĕн... Эпĕ ăна хамăн туйăмсем çинчен каласшăн кăначчĕ, анчах аттен хаяр сасси пĕтĕм ĕмĕте татрĕ: «Кĕретĕн-и паян, е çук-и?!...» Эпĕ Славикрен хăвăрт уйрăлтăм та пӳрте чупса кĕрсе кайрăм. Вăл каç аттепе-анне мана 3 сехет хушши Славике мĕншĕн тĕл пулмалла маррине «ăнлантарчĕç». Мĕн кăна каламарĕç пуль вĕсем мана ун чух... Çак кунтан мана урăх клуба та кăлармарĕç. Славик пирĕн тĕле килсе пĕр-ик хутчен шăхăрчĕ, анчах та эпĕ ун патне тухаймарăм, атте сăмахĕнчен иртеймерĕм...

Славика курманни кăрлач уйăхĕнче çур çул çитет. Юлашки 4 уйăхне вăл яла та килмерĕ. Халĕ вăл Мускаврра ĕçлет тет. Эпĕ ăна мĕнле кĕтнине анне сисет, аттерен мана клуба тухма ирĕк пама ыйтать, анчах усси çук. Кун пирки илтсен атте ахăрса каять. Мана та, аннене те лекет вара. Мĕн тумаллине пĕлместĕп. Пĕр юлташ хĕрне хамăн чун ыратăвĕ пирки каларăм та: «Мăнтăрпа иртĕхетĕн. Сан пек пуян, ăслă, хитре хĕр хыççăн миçе йĕркеллĕ каччă çӳрет, эсĕ унпа ӳтетĕн», — терĕ.

Тархаслатăп сире, пулăшăр-ха, тархасшăн. Мĕн тумаллине пĕлместĕп. Çак юлашки çур çул хушшинче ним патне те ал пымасть. Килти ĕçсене тума та, урока хатĕрленме те вăй-хăват çитмест. Пĕтĕм шухăш та ман Славик çинчен кăна. Эпĕ макăрма та пăрахнă, унăн пĕртен пĕр сăн ӳкерчĕкĕ çине сехечĕ-сехечĕпе пăхма хатĕр. Тархасшăн, ман малалла мĕн тумаллине канаш парăр.

**Шаннă чечек**

**Хисеплĕ вулакансем! Эсир «Шаннă чечеке» мĕн сĕннĕ пулăттăр? Редакци сирĕн çырăвăрсене кĕтет.**

# УГРИ — ӲТ ЧИРĔСЕНЧЕН ПĔРИ

Сирĕн пит-куçа угри тапăнчĕ пулсан нумай тăхтаса ан тăрăр — дерматолог е косметолог патне канаш ыйтма кайăр. Чир шала кайсан — унтан тасалса пĕтме питĕ йывăр. Яка та çемçе ӳте каялла тавăрма темиçе уйăх е çул кирлĕ пулать.

Хĕрлĕ тата хура пăнчăсенчен ту хĕвелĕ, сиплĕ юшкăн, пулă çăвĕ те пулăшать.

Хутран-ситрен пĕрер угри кăна тухать пулсан çак вырăна сирĕн ятарлă кремпа е мазьпа /унăн пайĕнче цинк окисĕ, салицил кислоти, ихтиол тата тĕрлĕ сиплĕ ӳсен-тăран сĕткенĕ пур/ кунне темиçе хут хĕрхенмесĕр сĕрсе тăрăр. Кун пек кремсене хăйне хисеплекен кашни косметика фирми кăларса тăрать. Ыйтăр, туянăр, усă курăр!

Енчен те хаклă кремсем илме укçа-тенкĕ çитеймест пулсан сирĕ валли асаннесен канашĕ вырăнлă пулĕ.

**1-мĕш сĕнӳ.** 8-10 хутлă марля татăкне алоэ сĕткенĕнче йĕпетмелле те угрисем тухнă вырăна 30-40 мин. хумалла. Ку мелпе малтанах кашни кун, унтан — кун урлă, кайран — эрнере 2 хутчен сипленмелле. Алоэ сĕткенĕпе пурĕ 30 кун усă курмалла.

**2-мĕш сĕнӳ.** Марля татăкне палан сĕткенĕнче йĕпетмелле те угрисем тухнă вырăна 5-7 минутлăх хумалла. 10 мин. иртсен çак ĕçех тепĕр хут туса ирттермелле. Унтан пит-куçа тутлăхлă /питательный/ кремпа сĕрмелле. Палан сĕткенне кун сиктермесĕр 7-10 кун, кайран кун сиктерсе тата çавăн чухлĕ сĕрмелле.